25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ФЕВРАЛЬ
9
ЫТЛАРИКУН
31(6268) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Пирĕн войскăсем Фатеж, Краматорская, Азов хулисене тата Гостищево ятлă район центрĕпе чугунçул станцине тытса илнĕ

1. Февралĕн 7-мĕшĕнче Курскран çурçĕртерехре пирĕн войскăсем вирлĕн наступлени туса ФАТЕЖ хулине тытса илнĕ, çапла вара КУРСКПА ОРЕЛ хушшинчи шоссе çулне татнă.

2. Белгородран çурçĕртерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса ГОСТИЩЕВО ятлă район центрĕпе чугунçул станцине тытса илнĕ, çапла вара БЕЛГОРОДПА КУРСК хушшинчи чугунçула татнă.

3. Украинăра пирĕн войскăсем КРАМАТОРСКАЯ хулипе чугунçул узелне тытса илнĕ.

4. Дон çинчи Ростовран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем татăклăн атакăласа АЗОВ хулипе чугунçул станцине тытса илнĕ, çапла вара Дон шывĕн сулахай хĕрринче противникăн юлашки пунктне пĕтерсе тăкнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем КУРСК, КОРОЧА хулисене тытса илнĕ

1. Февралĕн 8-мĕшĕнче генерал-майор И. Д. ЧЕРНЯХОВСКИЙ юлташăн войскисем, вăйлă наступлени тунă хыççăн, КУРСК хулине тытса илнĕ.

Курск хулине чи малтан полковник А. М. БУШИН юлташăн, полковник И. А. ГУСЕВ юлташăн тата подполковник С. Н. ПЕРЕКАЛЬСКИЙ юлташăн войскисем кĕрсе кайнă.

Курск хулине илме, çурçĕр-хĕвеланăç енчен пырса çапса, полковник Д. Н. ГОЛОСОВ юлташăн тата полковник Т. К. ШКРЫЛЕВ юлташăн чăçĕсем пулăшнă.

Трофейсене нумай тытса илнĕ, вĕсене шута илесçĕ.

2. Белгородран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн КОРОЧА хулине тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Государствăна тырă памалли плана республика ирттерсе тултарчĕ

Республикăри колхозсем 1942 çулти ялхуçалăхĕнчи ĕçсене фронтпа çĕршыв валли нумайрах тырпул туса парас тĕллевпе туса пычĕç. Государствăна уменчи обязательствисене вăхăтра пурнăçласишĕн нумай колхозсем çине тăрса ĕçлерĕç. Республика февралĕн 6-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă хатĕрлесе памалли 1942 çулти плана ирттерсе тултарчĕ. Государствăна обязательствăпа йĕркипе, МТС ĕçленĕшĕн натуроплата памалли тата Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывмалли планпа пĕрлех республика 100,7 процент пурнăçларĕ.

Государствăна тырă хатĕрлесе парас тĕллевпе уйрăмах Етĕрне, Советски, Вăрнар, Чкаловски, Шупашкар районĕсем ăнăçлă ĕçлерĕç. Етĕрне районĕ государство умĕнчи тырă обязательствине 114,2 процент тултарчĕ, натуроплата тырă плана 111,9 процент, Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывмалли плана 122,4 процент пурнăçларĕ. Государствăна тырă парас ĕçе республика пуринчен малтан Вăрнар районĕ ирттерсе пурнăçларĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, государствăна тырă парас плана республикăн 16 районĕ ирттерсе тултарчĕ.

Нумай колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне плансăр ирттерсе çĕршер тонна тырă хывса пачĕç. Колхозниксем, колхозницăсем хăйсен тырри пĕр пайне Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывса пачĕç. Хĕрлĕ Çар фондне плансăр тырă хывас ĕçре Вăрнар районĕ 35 процент, Сĕнтĕрвăрри районĕ 38 процент, Сĕнтĕрвăрри районĕ 34,8 процент, Шăхасан районĕ 31 процент ирттерсе хывнă.

Танксемпе самолетсем тума республикăра 61 миллион тенкĕ ытла пухнă

Сталин юлташăн саламĕпе тата Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, республикăри ĕççыннисем „Колхозник Чувашии", „Тракторист Чувашии" колоннисене, боевой самолетсен „Комсомолец Чувашии" эскадрильне т. ыт. те тума февралĕн 6-мĕшĕ тĕлне 61 миллион та 559 пин тенкĕ укçа пухса банка хывнă.

Юлашки вăхăтра ку ĕçе уйрăмах Шупашкар хулинче, Улатăр хулипе районĕнче, Чкаловски, Шăмăршă районĕсенче вăйлатнă. Шупашкар хулинче январĕн 1-мĕшĕнчен февралĕн 6-мĕшĕ хушшинче Хĕрлĕ Çар валли танксемпе самолетсем тума 1.939.000 тенкĕ пухнă. Çавăн пекех Улатăр хулипе районĕнче—1.021.000 тенкĕ, Чкаловски районĕнче—1.450.000 тенкĕ, Шăмăршă районĕнче—1.007.000 тенкĕ пухнă.

Танксемпе самолетсем тума укçа пухас тĕлĕшпе республикăра малтанхи пекех Улатăр, Пăрачкав, Чкаловски, Шупашкар, Вăрнар районĕсем малта пыраççĕ. Улатăр хулипе районĕнче çак ĕç валли 4 миллион та 707 пин тенкĕ пухнă.

„Сирĕн укçăпа тунă самолет çинче эпĕ шанчăклăн вĕçĕп"

Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов юлташ Сарсков колхозник патне янă çыру

Пирĕн юратнă земляк — Совет Союзĕн Геройĕ Федот Никитич Орлов юлташ пирĕн редакципе çыру ячĕ. Вăл унта хăйĕн боевой самолет тумашкăн 100.000 тенкĕ хывнă Андрей Михайлович Сарсков колхозникe (Улатăр районĕнчи „Красный луч" колхоз) чĕререн тав туса, çапла çырать:

„Хаклă Андрей Михайлович! Хĕрлĕ Çарпа унăн сывлăшри вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн манăн хĕрӳллĕ салама тата пирĕн Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш Çар Флотĕнчи летчиксем-бомбардировщиксем тав тунине йышăнăр. Сире кулленхи ĕçре ăнăçлăх сунатăп тата нумай çулсем хушши пурăнма сывлăх сунатăп.

Сирĕн аллăрсене хытă чăмăртаса, эпĕ сире, тăван аттене шантарса калатăп, çапла шантаратăп: эсир перекетленĕ укçапа тунă самолет çинче эпĕ куçăмсем çĕре курнă чухне тата алăмсем штурвала тытнă чухне шанчăклăн вĕçĕп. Хамăр телейшĕн, халăхшăн, тăван çĕршывшăн, юратнă аттемĕр Сталиншăн çапăçса, эпĕ нимĕç тискер-кайăкĕсене пĕтерсе пырăп, гитлерла вăрă-хурахсене тĕпĕ-йĕрĕпе аркатса тăкиччен вĕсем çине вут-хĕм тăкăп, бомбăсем пăрахăп

Совет Союзĕн Геройĕ
капитан Ф. Н. ОРЛОВ»

Самолетсен „Комсомолец Чувашии" эскадрильине тума

ИШЛЕЙ. Боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума укçа пухнă çĕре Тиĕшри вăтам шкулта вĕренекенсем активлăн хутшăнчĕç. Н. Сергеева çак ĕç валли 110 тенкĕ, Осипова—100 тенкĕ, Н. Яковлев, А. Прохоров, Дашкова — 50-шар тенкĕ пачĕç.

В. Ефимов.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 7-мĕшĕнче Курскран çурçĕртерехре пирĕн войскăсем вирлĕн наступлени туса Фатеж хулине тытса илнĕ, çапла вара Курскпа Орел хушшинчи шоссе çулне татнă.

Белгородран çурçĕртерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса Гостищево ятлă район центрĕпе чугунçул станцине йышăнса илнĕ, çапла вара Белгородпа Курск хушшинчи чугунçула татнă.

Украинăра пирĕн войскăсем Краматорская хулипе чугунçул узелне, Савинцы ятлă район центрĕпе чугунçул станцине, Петровская ятлă район центрне, Чепель, Протопоповка, Червонный Шахтер, Грушеваха ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Дон çинчи Ростовран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем татăклăн атакăласа Азов хулипе чугунçул станцине тата Катальник ятлă халăх пурăнакан пысăк пункта тытса илнĕ. Дон çинчи Ростовран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чăçсем Ольгинская ятлă халăх пурăнакан пысăк пункта тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

Иртнĕ эрнере, январĕн 31-мĕшĕпе февралĕн 6-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата тăшманăн аэродромĕсенче нимĕçсен 149 самолетне пĕтерсе тăкнă, çав вăхăт хушшинче пирĕн 93 самолет пĕтнĕ.

* * *

Февралĕн 6-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинăна ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 9 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, тăшманăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран кăнтăртарахра пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă. Н-ски соединени тăшман оборонин вăйлă тĕреклетнĕ темиçе узелне тытса илнĕ. Пирĕн боецсем нимĕçсен моторизованнăй отрядне пĕтерсе тăкнă, 4 автомашина тата 4 противотанковăй оруди тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем юханшыв урлă каçнă та халăх пурăнакан 3 пункта йышăнса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ, тыткăна илнĕ.

* * *

Барвенково районĕнче пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступленилле çапăçусем туса пынă. Тăшманăн темиçе контратакине сирсе ярса, совет чăçĕсем малалла кайнă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пунктăн районĕнче кăна 12 оруди (вĕсенчен 4-шĕ — пысăк калибрлисем), 31 пулемет, 9 миномет, боеприпассен 2 складне тата продовольствин 3 складне тытса илнĕ. Н-ски чăçăн танкисчĕсем нимĕçсен 6 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 3 туппине тата пĕр батальона çити пехотине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Купянскран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе малалла куçса пынă. Совет танкисчĕсемпе мотопехота сасартăк пырса тапăнса, халăх пурăнакан пĕр паха пункта тытса илнĕ. Тăшман гарнизонне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Нумай трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Н-ски чăçăн боецĕсем хаяр çапăçура 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. 2 танк, 7 оруди, 19 пулемет, тырă складне, япаласен 2 складне тата радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Старый Осколран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă. Н-ски чăçăн подразделенийĕсем халăх пурăнакан икĕ вăйлă тĕреклетнĕ пункта тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕç пехотин батальонне аркатса тăкнă. 6 танка тата 2 бронемашинăна çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Курскран çурçĕртерехре пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илсе, Орелпа Курск хушшинчи шоссе çулне татнă. Пĕр участокра нимĕçсем, совет чăçĕсене малалла кайма чарас тесе, контратака тунă. Пирĕн боецсем флангсенчен пырса çапнă тата гитлеровецсене аркатса тăкнă. 300 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, 230 салтакпа офицера тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски чăçăн боецĕсем 2 оруди, тĕрлĕ çар грузĕсем тиенĕ 42 автомашинăна тата боеприпассем тиенĕ обоза тытса илнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен Н. хулинчи учрежденийĕсене хăюллăн тапăннă. Партизансен пĕр ушкăнĕ часовойсене вĕлернĕ те хула комендатурин çуртне сирпĕнтерсе янă. Çав çуртра пулнă гитлеровецсем, вăл шутра штабра ĕçлекен старши офицерĕсем те, пурте вилнĕ.

* * *

Кăнтăр-хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен 304-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксен пĕр ушкăнĕ тыткăна паранна. Тыткăна парăннисем Карл Сима, Эрнст Шмидт, Рудольф Фрауэндорф тата ыттисем те çапла каласа панă: «Декабрь уйăхĕнче пирĕн дивизи Францирен çак маршрутпа тухса кайрĕ: Бельгия — Голландия — Дрезден — Краков — Днепропетровск — Ростов — Лихая. Çул çинче пире офицерсем çапла каларĕç: Сталинграда нимĕç войскисем çавăрса илнĕ, вăл парăнасса кунран кунах кĕтеççĕ, терĕç. Лихая станцинче эпир çакна пĕлтĕмĕр: Сталинградра вырăс войскисене мар, нимĕç войскисене çавăрса илнĕ иккен. Салтаксен шухăш-кăмăлĕсем часах пăсăлчĕç. Хĕвелтухăçĕнчи фронтра пирĕн дивизи малтанхи çапăçурах унка кĕрсе çакланчĕ те питĕ пысăк çухату тӳсрĕ. 573-мĕшпе 574-мĕш полксене аркатса тăкнă. Çав ункăран кашни хăй пĕлнĕ пек тухма хăтланнă. Каялла чакнă чухне командовани аманнисене çапăçу хирĕнчех пăраха-пăраха хăварнă, вĕсем вара шăнса вилнĕ. Чĕрĕ тăрса юлнă салтаксем хăйсене çĕнĕрен çавăрса илесрен питĕ хăраççĕ, çав тери пăшăрханаççĕ».

* * *

Аяларахра Курск облаçĕнчи Солоти ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç оккупанчĕсем колхозниксене йăлтах юхăнтарчĕç, колхоз пурлăхне çаратса пĕтерчĕç, çунтарса ячĕç. Гитлеровецсем колхозниксенчен 80 пуç выльăх туртса илчĕç, колхозăн хуралтисене тата пурăнмалли 13 çурта çунтарса ячĕç. Ялти çынсене вĕçĕмсĕр мăшкăллатчĕç, вĕсене хĕнетчĕç, асаплантаратчĕç. Фашистла палачсем 70 çулхи старике Г. Шеховцова, колхозницăсене, Евдокия Бабенкона, Анна Бабенкона тата 7 мирлĕ çынна вĕлерчĕç». Акта ялти çынсем Н. Духин, О. Устинникова, И. Шоховцов, А. Сергеева, А. Винокурова алă пуснă.

Февралĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон çинчи Ростовран кăнтăртарахра нимĕçсем хăйсен иртнĕ кун çухатнă позицийĕсене каялла тытса илме хăтланнă. Пирĕн боецсем тăшмана минометсемпе пулеметсенчен çил-тăвăллăн персе кĕтсе илнĕ. Тăшмана каялла чакарнă, çапăçу хирĕнче унăн салтакĕсемпе офицерĕсен нумай вилли выртса юлнă.

* * *

Краматорская районĕнче пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă. Гвардеец-танкистсем халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктшăн пынă вăйлă çапăçусенче нимĕçсен 11 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Питĕ нумай трофея тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет танкисчĕсен групи тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та нимĕç пехотин колоннине аркатса тăкнă.

* * *

Купянскран хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенин чăçĕсем тăшманпа çапăçса нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 4 танкне тата 3 орудине пĕтерсе тăкнă. 45 автомашина, боеприпассен складне тата хĕçпăшалсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем çĕрле халăх пурăнакан пысăк пункта кĕрсе кайнă та урамри çапăçусенче нимĕç пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă, çав пункта вара тытса илнĕ. 2 танк, 3 противотанковăй оруди тата 16 пулемет тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Курскран çурçĕртерехре пирĕн войскăсем, малалла тапăнса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта ирĕке кăларнă. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, 22 танк, 33 оруди, 42 пулемет, 30 миномет, 20 автомашина, 4 радиостанци, 10.000 снаряд, нумай патронсем тата ытти тĕрлĕ трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Курск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшманăн гарнизонĕсене темиçе хутчен тапăнса 130 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Çав отрядри партизансен ушкăнĕ пĕр эрне каялла нимĕçсен 3 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Тепĕр отрядри партизансем чугунçула темиçе тĕлте сирпĕнтерсе янă тата телефонпа телеграф пралукне 5 километр тăршшĕ касса илнĕ.

* * *

Итальянецсен «Равенна» ятлă дивизийĕнчи 37-мĕш полкăн тыткăна лекнĕ командирĕ полковник Джованни Колдини çапла каласа панă: «Манăн подразделенисем оборонăра тăнă, вĕсем вăйлă тĕреклетнĕ укрепленисенче вырнаçса тăнă. Вырăс танкĕсем наступлени тума пуçласа пирĕн оборонăна арпаштарса ячĕç. Пирĕн лару-тăру питĕ йывăрланса çитрĕ. Полкăн сылтăмри флангĕнче нимĕçсен 298-мĕш дивизийĕн чăçĕсем тăратчĕç. Нимĕçсем манăн лӳчĕркеннĕ полка нимĕнле пулăшу та памарĕç. Вара эпĕ каялла чакма шут тытрăм, анчах та вырăссем пирĕн каялла чакмалли пур çулсене те пӳлсе лартрĕç, полкăн юлашкийĕсем вара хăйсен штабĕпе пĕрле тыткăна лекрĕç». Юлашкинчен Колдини полковник çапла каласа панă: «Нимĕçсем электричествăпа ĕçлекен çĕнĕ пулемет çинчен нумай çырчĕç. Анчах ун пек пулемет тĕнчере çук. Ун çинчен калани вăл суя сăмах. Тĕнчере çук «электричествăллă пулемет» пирки шавлани вăл пропаганда тĕллевĕпе тунăскер».

* * *

Аяларахра Воронеж облаçĕнчи Репьевка ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Гитлеровецсем пирĕн ялта юн нумай юхтарчĕç. Фашистла палачсем Воронков колхозникe çакса вĕлерчĕç, колхозниксене Тихон Волкенкина, Петр Токарские, Ольга Пакаринăна тата ытти нумай çынсене вĕлерчĕç. Фашистла чуниленсем мĕнпурĕ мирлĕ пурăнакан 220 çынна асаплантарса вĕлерчĕç. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем ялсоветне кĕрекен 7 колхоза çаратса, тустарса пĕтерчĕç, 1.500 пуç выльăха хăваласа кайрĕç, колхозăн нумай пурлăхне çаратса илсе кайрĕç. Хĕрлĕ Çар пырса çапнипе каялла чакнă чухне нимĕçсем 2 шкула, библиотекăна, кинотеатра, больницăна тата ача çуратмалли çурта çунтарса ячĕç». Акта ялсовет председателĕ Нефедченко, Репьевка ялĕн çыннисем Фабрицкая, Черническо, Щербакова алă пуснă.

Отечественнăй вăрçăн инваличĕсене паракан льготăсем

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ отечественнăй вăрçă инваличĕсене, предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче ĕçлекеннисене, чылай льготăсем памалла тунă. Отечественнăй вăрçă инваличĕсене, предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекеннисене, вĕсен ĕçукçи мĕн чухлине пăхмасăр, колхозсенче ĕçлекенсене вĕсен дохочĕ мĕн чухлине пăхмасăр, пенси тӳлесе тăраççĕ. Предприятисемпе учрежденисен руководителĕсене ĕç пултарулăхне тĕрĕслесе палăртакан врачсен комиссийĕ тĕрĕсленĕ тăрăх инвалидсене черетлĕ отпусксем пама ирĕк панă. Вăхăтлăха ĕç пултарулăхĕ çухалнишĕн тӳлекен пособие отечественнăй вăрçă инваличĕсене вĕсен пĕр таталмасăр тăсăлакан ĕç стажĕ мĕн чухлĕ пулнине пăхмасăрах тӳлеççĕ. (ТАСС).

Квартал планне Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне тултарассишĕн

КАЛИНИНО. Лесничествăри рабочисем П. Муравьев, М. Карягин, П. Михайлов юлташсем кулленхи нормăна 200—250 процент тултараççĕ. Вĕсен ĕç пахалăхĕ те лайăх.

Лесничество коллективĕ халĕ пĕрремĕш кварталти ĕçсен планне февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешет.

Б. Шорников.

ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсемпе МТС политотдел начальникĕсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсен республикăри канашлăвĕ

Февралĕн 5-мĕшпе 6-мĕшĕнче ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсемпе машинно-тракторнăй станцисен политотдел начальникĕсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу çуракине хатĕрленессипе тата комсомол организацийĕсен задачисем çинчен сӳтсе-яврĕ. Ку ыйтупа ВЛКСМ Красноармейски тата Шупашкар райкомĕсен секретарĕсем Мироновăпа Смирнова юлташсем, Улатăр МТС политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ Темпейская юлташ докладсем туса пачĕç.

Докладчиксем тата прение тухса калакансем комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тунă ĕçсем çинчен каласа пачĕç.

Красноармейски районри „Янмурзино" колхозĕнчи комсомолецсем колхоза агротехникăн хĕллехи мероприятийĕсене пурнăçа кĕртмелли ĕç планне туса панă. Вĕсем хăйсен вăйĕпе уя 500 лав тислĕк кăларнă, 76 центнер кĕл пухнă, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ, мĕнпур ялхуçалăх машинисене юсанă, вăрлăха сортласа хунă. „Красное Сормово", „Четаи" колхозсенчи çамрăксем майракаллă шултăра выльăха кӳлсе çӳреме хăнăхтарас ĕçе пуçарнă. Анчах çак лайăх пуçару районри ытти колхозсенче анлăн сарăлайман. ВЛКСМ райкомĕ агротехникăн хĕллехи мероприятийĕсене пурнăçлана çĕре çамрăксене тивĕçлипе мобилизацилеймен. Ку таринчченех районри 13 колхозра комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем çук.

ВЛКСМ Шупашкар райкомĕ колхозсенчи тимĕрçĕсене пулăшма 11 комсомолеца тата союзра тăман 17 çамрăка уйăрнă. Вĕсем ялхуçалăх машинисене ремонтлас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Райком ялхуçалăх машинисен пайĕсене пухас тĕлĕшпе 8 воскресник ирттернĕ, вĕсене 1.793 çын хутшăннă. Çамрăксем 7.943 тенкĕлĕх машина пайĕсем пухнă. Кăçал районри 10 колхозра комсомолăн пуçламĕш организацисене çĕнĕрен организациленĕ. Вырăнти удобренисене хатĕрленĕ çĕре пионерсемпе шкул ачисем те активлăн хутшăннă. Куснарти пуçламĕш шкулти пионерсем 25 центнер кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. „Молния" колхозри çамрăксем уя 1.800 лав тислĕк кăларнă, 45 центнер кĕл хатĕрленĕ, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Районра çамрăксен вăрлăх сортлас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадисене организациленĕ. Анчах çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тунă ĕçсене çапах та çителĕклĕ теме çук-ха.

Канашлура ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсем Кириллова (Куславкка), Павлова (Канаш), Андреев (Çĕрпӳ), Яковлева (Тăвай) юлташсем, МТС политотдел начальникĕсен комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕсем Токсубаева (Етĕрне), Ярадайкин (Хĕрлĕ Чутай), Ионова (Сĕнтĕрвăрри), Вдовенкова (Çĕмĕрле), Максимова (Ишлей) юлташсем тухса каларĕç.

Тӳрех калас пулать, хăшпĕр районсенче (Сĕнтĕрвăрри, Советски, Шăмăршă, Етĕрне, Çĕрпӳ) çуракине хатĕрленес ĕçе комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем çителĕксĕр хутшăнаççĕ-ха. Апла пулин те, комсомолăн унти организацийĕсем çуракине лайăх хатĕрленсе кĕтсе илессишĕн кĕрешмеççĕ, ку ĕçшĕн ответлăха туймаççĕ.

Канашлура Чăваш АССР Наркомзем Политсекторĕн начальникĕ В. П. Чернов юлташ тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче уйрăмах механизаторла кадрсемпе колхоз кадрĕсене хатĕрлесси, ĕнесене ялхуçалăхĕнче ĕçлеме вĕрентесси, çамрăксен çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадисене организацилесси çинчен чарăнса тăчĕ.

Канашлу хупăнас умĕн ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Белков, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ Михайлов юлташсем сăмах тухса каларĕç. Вĕсем комсомолăн республикăри организацийĕсем умне çуракине хатĕрленес, комсомолăн ялти организацийĕсене çирĕплетес тата МТС работникĕсемпе колхозниксем хушшинчи массăллă ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли задачăсене палăртрĕç.

Хĕрлĕ Çар фондне— 1.000 литр сĕт

Вăрманкасри (Вăрмар районĕ) Дмитров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Михайлов юлташ) Хĕрлĕ Çар фондне 1.000 литр сĕт пачĕ.

(«Хĕрлĕ ялав»).

Нимĕçсене Сталинград патĕнче аркатса тăкнă ятпа

КУКЕÇ, февралĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче чаплă çĕнтерӳ тунă ятпа районри колхозсемпе предприятисенче, шкулсемпе учрежденисенче ĕçченсен митингĕсемпе пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

Çак чаплă çĕнтерӳпе хавхаланса, районри ĕççыннисем фронта пулăшассине вăйлатреç, суракине хатĕрленес ĕçе хăвăртлатрĕç тата хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Юлашки ик-виçĕ кун хушшинче районри колхозсем хĕрлĕ обозсем организацилесе 180 центнер тырă Хĕрлĕ Çар фондне леçсе пачĕç. „Первое мая" колхоз членĕсем—15 центнер, „Молния" колхоз членĕсем—10 центнер леçнĕ.

Сталинград патĕнче нимĕçсене тĕпĕ-йĕрĕпе аркатса тăкни çинчен сутсе-явма пухăннă митинга машинно-тракторнăй станци коллективĕ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа тĕлне тракторсемпе ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса çитерме обязательство илнĕ. Çавăн пекех колхозсенче чылайăшĕсем çак çулхи суракине хатĕрленсе çитнĕ пулнине кĕтсе илме пулчĕç. Шăмăш сельсоветĕнчи колхозсем, пĕтĕмпех юсаса, суракине хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăхсене çителĕклĕ таранах сортласа хатĕрленĕ, тивĕçлĕ кондицие ларнă, плугсемпе сеялкăсене ремонтланă. Халĕ транспорт инвентарĕсене лаша кӳлмелли хатĕрсене юсаççĕ.

В. Караушев.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче нимĕç вăрахурахĕсен юлашкисене тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкни районĕн ĕççыннисене те пысăк савăнăç кӳнĕ. Халăх фронта вăйлăрах пулăшма, çĕнтерӳ тума хавхаланатарчĕ. Чаплă çĕнтерӳпе хавхаланса, Нерчекри „КИМ" артель колхозникĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене вăл ăшă тумтирсем хатĕрлес ĕçе вăйлатрĕ. Çак кунсенче унта 25 кĕрĕк пиншак, 55 мăшăр алшиш çĕлене тата 380 тир туса хатĕрлене. Тунă тирсенчен çак кунсенчех кĕрĕк пиншаксем çĕлеççĕ.

Çĕнтерӳ ячĕпе пулнă митинга артель членĕсем 1943 çулхи плана 150—200 процент тултарма пулчĕç.

Н. В.

ХАЛĂХ СУЧĔН ОТЧЕЧĔ

ЕЛЧĔК. Çак кунсенче районри халăх судьи Иванов юлташ Ентепери колхозниксемпе колхозницăсен тата единоличниксен пĕрлехи пухăвĕнче районри халăх сучĕн 1942 çулти ĕçĕсем çинчен отчет туса пачĕ.

Пухури çынсем халăх сучĕн ĕçне тишкерчĕç, малашнехи ĕçре вăрçă вăхăтĕнче совет законĕсене пăсакансене хирĕç татах та хыттăнрах кĕрешсе пыма хушрĕç.

Н. Артемьев.

Колхозсем валли—çĕнĕ кадрсем

Çураки ăнăçлăн иртесси кадрсене вăхăтра лайăх вĕрентсе хатĕрленинчен нумай килет. Ялхуçалăх ĕçĕнче пулнă квалификациллĕ кадрсем чылайĕшĕ халь фронтра. Çакна шута илсе, кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе кăçал уйрăмах тимлĕн туса пымалла.

Вăрнар районĕнчи партипе совет организацийĕсен руководителĕсем çакна тĕплĕн ăнланнă. Ялхуçалăх кадрĕсене хатĕрлес ĕçе вĕсем кĕркуннех кирлĕ пек организациленĕ.

Январĕн 30-мĕшĕнче уйĕç бригадирĕсен икĕ уйăхлăх курсĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Курсран 61 бригадир вĕренсе тухрĕç. Курс Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозра пулса иртрĕ. Бригадирсен вĕренĕвĕ колхозăн организациллĕ ĕçне куç кĕретĕн курса паллашнипе çыхăнса пычĕ. Занятисене ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ С. Коротков юлташ, колхозăн агрономĕ Ерлакова тата райçĕрĕç пайĕн агрономĕсемпе МТС работникĕсем ирттерчĕç. Курсра вĕренекенсене Сталин юлташ ячĕпе тăракан колхозăн ĕçĕсемпе Васянин юлташ паллаштарчĕ.

Счетоводсен курсĕ районра декабрĕн 1-мĕшĕнче уçăлнă. Ку курса районри зоотехникум çумĕнче организациленĕ. Занятисене техникум преподавателĕсем тата райçĕрĕç пайĕн работникĕсем ертсе пыраççĕ. Халĕ счетоводсен курсĕнче 31 çын вĕренет. Нумаях пулмасть трактористсем хатĕрлекен курсран 42 çын вĕренсе тухрĕ. Курс малалла пырать, иккĕмĕш наборта тракторсемпе ĕçлеме 45 çын вĕренет.

Январь уйăхĕнче районра колхоз председателĕсен виçĕ кунлăх семинарĕ пулса иртрĕ. Çак çывăх кунсенчех махорка, сахăр кăшманĕ енĕпе ĕçлекен звеносене ертсе пыракансен курсĕсем уçăлмалла. Махорка туса илес ĕçĕн курсĕнче 70 çын, сахăр кăшманне туса илес ĕçĕн курсĕнче 40 çын вĕренмелле. Çавăн пек курссемех колхоз председателĕсем тата фермăсен заведующийĕсем валли пулса иртмелле.

Районри колхозсенче колхозниксен агротехника вĕренĕвне анлăн организациленĕ. Зеленовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз махорка тата сахăр кăшманĕ енĕпе ĕçлекенсен звенисене тунă. Ку звеносенчи колхозниксене агротехникăна участокри агроном Синицына юлташ вĕрентет.

Н. Кондаков.

Хĕрлĕ Çар кунне çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). «Калиновка» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитессишĕн кĕрешеççĕ. Кашни колхозник социализмлă ăмăртăва тухнă, çуракине хатĕрленес ĕçре пысăк вăй хурса ĕçлет. Паянхи куна акмалли вăрлăхсене сортласа хунă. Тулă, сĕлĕ, урпа, пăри тата пăрçа вăрлăхĕсен шăтас пахалăхне 99 процента çитернĕ.

Кăçалхи çул иртнĕ çулхинчен те вăйлăрах тырпул туса илес тесе, колхозниксем çĕре çемçетме удобренисем нумай хатĕрлерĕç. Январь уйăхĕнче колхоз уя 300 лав тислĕк кăларчĕ, 15 центнер кĕл, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса, район панă задание пурнăçларĕ. Ялхуçалăх машинисем те ĕçе хатĕр.

Колхозниксем лаша хатĕрĕсемпе транспорт инвентарĕсене тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕç, юсарĕç, колхозăн транспорт хуçалăхĕнче çирĕп йĕрке турĕç.

Колхозниксем Хĕрлĕ Çар кунне ытти ĕçре те çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Колхоз 1943 çулшăн государствăна аш-какай парса татрĕ. Колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне 120 пăт тырă хыврĕç, самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума 20.000 тенкĕ укçа пухса государство банкне хыврĕç.

С. Шадин.

Лашасене пăхас ĕçре ответлăх çук

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ колхозсенче лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçри обезличкăна пĕтермелли çинчен татăклă кăтартусем панă. Анчах çав кăтартусене Янкассинчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Йăлтах урăхла, кунта лашасене пăхас ĕçе татах та япăхлантарнă. Фураж çителĕклĕ пулсан та, лашасем нумай чухне выçă тăраççĕ, вăрăм çула кайсан вара ывăнаççĕ. Иккĕмĕш тата виççĕмĕш бригадăсенче конюхсем кăç пулсан лашасене витесене хупаççĕ те çĕр-каçа унта урăх тухса та пăхмаççĕ. Çавна пула витере пĕр лашана ытти лашасем тапса вĕлернĕ, тепĕр лаша питех те вăйлăн суранланнă, халĕ те чирлĕ выртать.

Колхозра çĕнĕ çула кĕнĕренпе 5 кĕсре хăм пăрахнă. Çакă вăл пĕтĕ кĕсресене йывăр ĕçе кӳлнипе тата хытă çӳренипе пулнă. Акă, Степан Федоров лашасене чунсăр пăхса ватса çӳренипе икĕ пĕтĕ кĕсре хăм пăрахнă, Василий Михайлов колхозник та ватса пĕр пĕтĕ кĕсрене хăм пăрахтарнă.

Лашасене пăхас ĕçре те тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе те колхозра ответлă çын çук. Бригадирсем ку ĕçрен аякра тăраççĕ. Камăн кӳлсе каяс килет, çавă никамран ыйтмасăрах тытать те кӳлет лашана. Вăрăм çула е йывăр ĕçе лашасене уямасăр кӳлеççĕ.

Çакăн пек çитменлĕхе халех пĕтермелле. Лашасем çине чунсăр пăхакан çынсене халех айăпласа ответ тыттармалла. Конюхсен ĕçри ответлăхне ӳстермелле.

Н. Виноградов.

Мухтавлă воинсем патне парнесем ытларах ярса парар

КӲКЕÇ, февралĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнер Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне парнесен пĕр ушкăнне ярса панă. Вăл парнесен шутĕнче 30 пăт аш-какай, 12 пăт колбаса, 100 килограмм окорок, 80 килограмм çу, 70 килограмм пыл, 1.000 çăмарта, 130 литр эрех, 75 килограмм махорка тата уйрăм посылкăсам 100 ытла. Уйрăм посылкăсене ĕççыннисем çу çинче ăшалана чăхсемпе хурсем, типĕтнĕ какай, эрех, печени, пĕçерсе сивĕтнĕ пельменсем, махорка, алшиш-носкисем тата ытти те хунă.

„Красный флот" колхоз членĕсем фронтовиксене 340 килограмм аш-какай, 10 килограмм çу, 3 пăт тулă çăнăхĕ ярса пачĕç. Çавăн пекех „Трактор" колхоз членĕсем те 10 килограмм пыл, 3 килограмм çу, 3 пăт тулă çăнăхĕ, 18 пăт çĕрулми ячĕç.

* * *

КАЛИНИНО. февралĕн 8-мĕшĕ (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне ярса пама парнесем пухас ĕçе шкул ачисем те хутшăнаççĕ. Педагогика училищинче тата Аçăмçырмари туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем фронтовиксем патне ярса пама 492 енчĕк, 82 сăмса тутри, илемлĕ литература кĕнекисем—175, 42 килограмм махорка т. ыт. те пухрĕç.

Б. Шорников.

Йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленеççĕ

ВАРМАР. Районри колхозсемпе пур шкулсенче те Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленеççĕ. Йĕлтĕрçĕсем хатĕрлес енĕпе ĕçлекен 43 инструктор 1.895 çынна йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентсе хатĕрленĕ. Йĕлтĕрçĕсен командисем час-часах тренировкăллă занятисем туса ирттереççĕ. Çавăн пек занятисем ку таранччен пур шкулсенче те 4 хутран кая мар пулса иртнĕ.

Йĕлтĕрçĕсен кросĕ пуçланасси инçе юлмарĕ. Çак юлнă вăхăтра ĕнтĕ кроса хутшăнма хатĕрленсе çитес шутпа ăмăртусем туса ирттермелле. Анчах та ку ăмăртусене Шăхальти, Вăрмарти, Текеçри шкулсемсĕр пуçне урăх ниçта та туса ирттермен. Çак ăмăртусене туса ирттерме районра пур майсем те пур, вĕсене ирттерме кансĕрлекен нимле чăрмав та çук. Йĕлтĕрсем çителĕклĕ. Вĕсем районри пилĕк базăра 423 мăшăр шутланаççĕ.

* * *

КАЛИНИНО. Педагогика училищинче вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă ятпа иртекен йĕлтĕрлĕ кроса тимлĕн хатĕрленеççĕ. Кашни вĕренекенĕн хăйĕн йĕлтĕрĕ пур. Вĕсем уроксем хыççăн тата канмалли кунсенче йĕлтĕрпе çӳреме хăнăхаççĕ.

Çапла, нумай пулмасть пулса иртнĕ йĕлтĕрлĕ тренировкăра 5 километрлă дистанцие Г. Михайлов—27 минутăра, М. Николаев, Н. Сергеев—28-шар минутăра чупса тухрĕç.

Т. Филиппов.

Ют çĕршывсенче

„Сталинградшăн çапăçни—историри чи вăйлă çапăçусенчен пĕри пулса тăрать"

Америкăри хаçатсем Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче çĕнтерни çинчен

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). „Нью-Йорк Уорлд телеграмм" хаçат çапла çырать: Совет войскисем Сталинград патĕнче çĕнтерни союзлă çĕршывсенчи халăха питех те хавхалантарчĕ. Унта çав çĕнтерӳ вăл вăрçă ĕçĕсем тепĕр майлă çаврăнса каяс вăхăт çитнине кăтартса парать тесе шутлаççĕ. Хаçат Хĕрлĕ Çарăн çапăçури пахалăхĕсем лайăххине, унăн командирĕсен ăсталăхне, фронт линийĕ хыçĕнче гражданла халăх хăйне хăй йĕркеллĕ тытнине палăртать. Çав пахалăхсене пула Хĕрлĕ Çар гитлерла çара çĕнтерме май çук генĕ халлапа çилпе вĕçтерсе ячĕ.

Нью-Йоркра тухакан „Сен" хаçат шухăшĕпе, Сталинград патĕнче Германи войскисене хупăрласа илсе пĕтерсе тăкни Гитлерăн ятне питех те хытă вараларĕ. Германи халăхĕ Германи çарĕсем катастрофа тӳснĕшĕн Гитлер ответлă тесе шутлать, вăл Германи пропагандиăна тӳрре кăларма хăтланнине ĕненмест.

Сталинградшăн пынă çапăçу,—тет Вашингтонри „Стар" хаçат,—историри чи вăйлă çапăçусенчен пĕри пулса тăрать. Вăл вырăссем пĕтĕмпех çĕнтернипе тата тĕнĕл держависен войскисем пысăк катастрофа тӳснипе вĕçленчĕ. Сталинградри çапăçура вырăссем çынсем хăйсен ирĕкĕпе хастарлăхне ӳстерсе мĕн тери пысăк чăрмавсене те сирсе яма пултарнине кăтартрĕç. Сталинград нимĕçсемшĕн мясорубка пулса тăчĕ, вăл тĕнчери иртнĕ вăрçăри Верденран та харушăрах мясорубка пулса тăчĕ.

Хаçатсем тата çакна палăртаççĕ: Сталинград патĕнче тата Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтăн ытти участокĕсенче те Германи çарĕ калама çук пысăк çухатусем тӳсрĕ. Çакă вăл, тесе çырать „Чикаго дейли ньюс" хаçат, нимĕçсене хăйсен çухатăвĕсене, уйрăмах та Сталинград патĕнчи çухатăвĕсене, сапламашкăн Хĕвеланăç Европăран Совет Союзĕнчи фронта тата 22 дивизи яртарчĕ.

Радиокомментатор Харгрейвс çапла калать: Сталинградшăн пынă çапăçу тĕнчери чи пысăк çапăçусемпе юнашар вырăн йышăнĕ. Çав çапăçура Сталинăн çав тери чаплă çар стратегĕн пахалăхĕсем питĕ уççăн палăрчĕç, тет.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ЛАГЕРĔНЧЕ ПĂШĂРХАНАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри ĕçсем пирки гитлерла хаçатсем юлашки вăхăтра хытă пăшăрханаççĕ. „Лицманштеттер цейтунг" хаçат çапла çырать: „Хĕвелтухăçĕнчи фронтран салхуллă хыпарсем килеççĕ. Большевиксем пирĕн позицисене хаяррăн штурмлаççĕ, çапăçăва питех те йышлă техника кĕртсе яраççĕ, ăна таçтан тупса çитереççĕ вара.

Гитлерла хаçатсем совет резервĕсем пĕтĕмпех пĕтсе çитнĕ, Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсене, унăн техникине „пĕтерсе тăкнă" тесе пĕр хут çеç мар пĕлтернĕччĕ; çав хаçатсем халь, хăйсем маларах çырнине манса кайса, Хĕрлĕ Çар çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пирĕннинчен вăйлăрах, тесе кăшкăраççĕ.

Гитлерла хаçатсем нимĕçсене Германире тăвакан „пĕтĕмĕшлĕ мобилизацие" пулăшма чĕнеççĕ, анчах та Германире çынсем çав „пĕтĕмĕшлĕ мобилизацие" вăйлăн хирĕç тăнине тата çак хирĕç тăни кунсеренех ӳссе пынине пытараймаççĕ. „Данцибер форпостен" хаçат „халь лару-тăру питех те хăрушă иккенне, çапăçу ытла та хаяррăн пынине" ăнланса илмен нимĕçсене хăратса çырать. Çынсем „ытлашши лăпкăн, событисемпе интересленмесĕр пурăнаççĕ", тесе ӳпкелешет хаçат. „Халĕ тĕрлĕ „анчах"-сен вăхăчĕ мар,—тесе çырать вăл,—вак-тĕвекшĕн хăрамалли вăхăт мар, вăрçă куллен ыйтнине парса ямалли вăхăт мар", тет. „Дейче альгемейне цейтунг" хаçат та çавăн пекех çырать.

ЧИЛИ ДИПЛОМАЧĔ ГЕРМАНИПЕ ИТАЛИ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет. Европăран нумаях пулмасть таврăннă полковник Валенсиа, Берлинпа Римра Чилин çар атташи пулса ĕçленĕскер, Гамбургра, Бременра тата Берлинра бомбăсем ытла та нумай çĕмĕрнине хăй курни çинчен каласа панă. Курнă çынсем каланă тăрăх, Любенка пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă.

Валенсиа çапла каланă: Итали халăхĕ фашизма хирĕç тăрать, вăл мир тăвасшăн. Итали флочĕ союзниксен суднисене Сицили проливĕпе пыма чараймасть. Италин мĕнпурĕ те виçĕ линкор çеç, вĕсенчен те пĕри сиенленнĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ АНГЛИЕ ТАВĂРĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль Англие таврăннă.

Пĕлтерӳ

Февралĕн 10-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн парткабинетĕнче агитаторсемпе докладчиксем валли „Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарни" темăпа инструкциллĕ лекци пулать. Лекцие лектор И. Д. Мошнин юлташ вулать.

Парткабинет.

Фронтовиксен çырăвĕсем

Эпир—матроссем

Взвод пысăк хăрушăлăха лекрĕ. Краснофлотецсем тăшманăн тылне чылай шала кĕрсе кайнă пирки, ытти подразделенисенчен уйăрălса, тăшманăн ункине кĕрсе ӳкрĕç. Тăват тăмĕш кун татти-сыпписĕр çапăçаççĕ паттăрсем.

Ку ĕç Инçетри Çурçĕрте пулса иртрĕ. Эпир, североморецсем, хĕл вăхăтĕнчи полярти вăрăм та тĕттĕм каçпа усă курса, тинĕс тăрăх катер-охотниксемпе килсе, тăшман вырнаçнă çыран çине тухрăмăр. Нимĕçсем çакна кĕтмен. Çавăнпа та систермесĕр пырса çапнине тӳсеймесĕр, вĕсем, пĕр высота хыççăн тепĕрне хăварса, каялла чакса пычĕç.

Новицкий лейтенантăн взвочĕ нимĕçсен тĕреклетнĕ пунктне штурмлама тытăнчĕ — блиндаж хыççăн блиндаж çĕмĕрет, тăшман хуралне аркатать, трофейăсем тытса илет. Трофейăсене хамăрăн катерсем çине ăсатма ĕлкĕрнĕ-ĕлкĕрменех çĕре кăвак тĕтре хупăрласа илчĕ. Вĕтĕ çăмăр пĕрĕхме пуçларĕ. Çывăхри чуллă сăртсен тăррисем те палăрми пулчĕç.

Новицкий хăй патне иккĕмĕш статьяри старшинана Юшкова чĕнсе илчĕ те умра сарăлса выртакан айлăма разведка туса тĕпчеме хушрĕ. Вăл айлăмра тăшман ункинчен тухмалли пĕртен-пĕр çул — хĕсĕк коридор кăна тăрса юлма кирлĕ.

Юшков тинĕс пехотине киличчен сторожевик çинче боцман пулнă. Халь десантнăй бригадăра службăра тăрать.

Новицкий Юшкова татах та темĕн каласшăнччĕ. Ăнсăртран мина шăхăрса килсе ӳкрĕ те Юшкова çĕр çине çаврăрса пăрахрĕ. Юшков йĕпе çĕр çинчен каялла тăнă чухне хăйĕн лейтенанчĕ Новицкий пĕр тапранмасăр выртнине курах кайрĕ.

— Лейтенант юлташ!—кăшкăрчĕ вăл улшăннă сасăпа,

Ответ пулмарĕ:

— Новицкий юлташ!—тепĕр хут хытăраххăн кăшкăрчĕ Юшков. Анчах Новицкий ĕмĕрлĕхех чĕмсĕр пулнă иккен. Юшков вара командирăн связнойне чĕнсе илчĕ те приказани пама тытăнчĕ:

— Взвода малашне эпĕ командир пулса ертсе пыратăп. Хăвăртрах рота командирне тупса Новицкий вилни çинчен пĕлтер.

Юшков ăшĕнче хăйсем ротăран тахçанах уйăрăлса кайнине, халĕ ĕнтĕ ротăна тупма питĕ йывăррине, вĕсен пĕр çул кăна тăрса юлнине аса илчĕ. Çав çул çинчен лейтенант хăй вилес умĕн каласа хăварчĕ. Çав çула, темле йывăр килсен те, аларан вĕçертес пулмасть. Задача çăмăл мар. Высотана гитлеровецсем икĕ ротăран кая мар тăракан йышпа сырса илнĕ. Юшковăн взводĕнче вара çынсем питех те сахалланса юлчĕç. Икĕ ручной пулемет пур.

Юшков пур çĕре те çитсе çаврăнчĕ. Унăн сăн-питĕнчи яланхи савăнăçлă кулă халĕ çухалнă. Командир красноармеецсене умма пысăк харушлăх тухса тăни çинчен пĕлтерчĕ.

— Пĕр-пĕрне пулăшăр. Пĕр-пĕрне ан пăрахăр. Мĕнпур вăйран, юлашки патрон юлмиччен çапăçăр. Патрон пĕтсен, тăшмана хирĕç штыксемпе тăрăр. Эпир краснофлотецсен ятне вараламăпăр,—терĕ Юшков.

Вăл ытти краснофлотецсем патне кайрĕ. Унта та Юшковăн сăмахĕсем илтĕнме пуçларĕç.

— Ну, мĕнле, Беляков? Шăл сурмасть-и?

...Пиллĕкмĕш кун пырать юнлă çапăçу, Юлашки сехетре татăх икĕ юлташ—Беляковпа Шаронов хăйсен пуçĕсене хучĕç. Взводра 12 çын çеç тăрса юлчĕ. Çапах та, тăшман, кашни контратака пуçланмассеренех, моряксен çирĕплĕхне тӳсеймесĕр каялла чакать.

Каçхине ротăран связной таврăннă.

— Ну-и çул! Фриц тăхлана çăмăр пек çутарать. Пур çĕрте те йывăççем çине „куккуксем" лартса тухнă. Пĕр утăм ярса пусма та теме тăрать,—тет связной.

Связной взвода пулăшу ырăн кăна пуласси çинчен пĕлтерчĕ. Унччен çак сăрта хамăрăн вăйпах хӳтĕлесе тăрас пулать.

— Командира пĕлтер: сăрт çине пĕр нимĕçе те хăпартмастпăр!—терĕ Юшков связноя. Юшковпа связной пĕр чул патĕнчен тепĕр чул патне упаленсе, кашни краснофлотеца тĕрĕслесе тухрĕç. Чылайĕшĕ аманнă—кашни е пуçне, е аллине бинтпа чăркаса çыхнă. Татти-сыпписĕр çапăçура пулнипе халран кайнă моряксем калаçма та йывăррăн калаçаççĕ. Винтовкăна ылăра тытса тăма та хал çук пек туйăнать. Анчах çапах та, тăшман кăшт курăнсанах, хĕрлĕ боецсем винтовкăсене ярса тытаççĕ те халь-халех çапăçăва тухма хатĕр пулаççĕ.

Рота командирĕ патне кайнă связной каялла таврăнмарĕ. Ир çинче Юшков патне урăх краснофлотец пакет илсе килчĕ.

— Хăшĕ кунта Юшков?—тесе ыйтрĕ вăл. — Тăшман ункинчен сире çăлса кăларма каçхине пулăшу килет.

Вăл хăй илсе килнĕ пакета Юшкова тыттарчĕ.

Юшков ун çине тинкерсе пăхрĕ. „Вăл çамрăк краснофлотец, анчах усси çитĕнтерне"—тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнче Юшков. Плащ-палатка айĕнче хура бушлат. Бушлат çийĕн пулемет патронĕсен икĕ лентине хĕреслесе çакнă. Краснофлотец хутран-ситрен хăйĕн икĕ еннелле шĕвĕрĕлсе тăракан уссине пĕтĕркелесе илет. Уссийĕ темĕнле юри çыпăçтарса лартнă çăм пек туйăнать. Паллă çын, темиçе çĕр çын хушшинче те ăна часах палласа илме пулать тейĕн.

— Эпĕ сирĕн пата юлатăп, сирĕн взводра пулатăп. Пĕрле çапăçатпăр,—тет вăл Юшков çине пăхса,

— Пĕрле çапăçатпăр!—лăпкаса илчĕ ăна Юшков хулпуççинчен.— Эсĕ таххăрăмĕш пулăн.

— Мĕншĕн таххăрмĕш?—ыйтрĕ уссиллĕ матрос.—Эсир вуниккĕн терĕç-çке.

— Ĕнтĕ сакăрăн кăна юлтăмăр.—салхуллăн ответлерĕ Юшков.—Эсĕ ручной пулеметпа пеме пĕлетĕн-и?

— Ручной пулемет? Пĕлетĕп Малтанлăха, хăнахиччен, ирĕк парăр кăна çав айлăмра куккушкăна персе ӳкерме.

— Яра пар!—ăна хулпуççийĕнчен çапса каларĕ Юшков.

Уссиллĕ матрос куç умĕнчен çухалчĕ. Çур сехет кăна иртрĕ, вăл каялла килсе те çитрĕ. Унăн аллинче—нимĕç автомачĕ.

— Акă эпир—матроссем!

Унтан вăл пĕр лайăх вырăн тупса хăйĕн пулемечĕпе вырнаçрĕ. Юшков каллех ун патне упаленсе пычĕ.

— Выртатăн?

— Выртатăп. Яр-ха мана, тепрер сунара кайса килем.

— Кайса кил.

Ку хутĕнче уссиллĕ матрос татах та хăвăртрах кайса килчĕ. Вăл снайпер валли ятарласа прибор лартса тунă карабина çĕклесе таврăнчĕ.

— Эпир—матроссем!—терĕ вăл хальхинче те.

Нимĕçсем, каçхи тĕттĕмлĕхпе усă курса, сăрт çине хăпарма шут тытрĕç. Унччен вĕсен миномечĕсем пирĕн çине татти-сыпписĕр вут тăкрĕç. Мина ванчăкĕ лекнипе уссиллĕ матросăн автомат приклачĕ çурăлса кайрĕ.

— Юрать. Каплипе те вуншар фрица персе ӳкерĕп-ха!—тет вăл автоматне хăрах аллипе çĕклесе.— Хам чĕрĕ. Кур-ха акă: хам чĕрĕ юлтăм!—хăйĕнчен-хăй тĕлĕнсе калать вăл хăй çумне пырса выртнă Юшкова.

Вăл автоматне аякка хучĕ те пулемет тытрĕ. Сăрталла шуса хăпаракан нимĕçсем çине черет хыççăн черет кăларса ярса, чылай фрицсене çулса тăкрĕ вăл. Унтан гранатăсем вăркăнма пуçларĕç. Уссиллĕ матрос та ура çине тăрат тăрах гитлеровецсен пуçĕсем çине граната хыççăн граната персе ячĕ. Тăшман сăрт çинчен татах каялла сирпĕнсе анчĕ.

— Эпир—матроссем!

Нимĕçсем каялла чакрĕç пулин те, чул тĕммисем çине çапăнна арканакан-пульăсем шăхăрса килме пăрахмарĕç.

Каплах пулсан, манăн татах сунара каяс пулать,—терĕ уссиллĕ матрос.

Çак самантра пăшал сассисем урăх çĕрте янраса кайни илтĕнчĕ. Авă, уйăх çутинче, шурă юр çийĕпе, плащ-палатка тăхăннă çынсем, пĕрерĕн-пĕрерĕн сапаланса килекенскерсем, курăнса кайрĕç. Пулăшу калана вăхăтрах çитрĕ.

Причал çине кайăр. Канăр,—терĕ моряк-капитан, Юшковăн боецĕсем çине пăхса.

Юшков хăй тĕллĕн утма пултаракан моряксене пухса тинĕс хĕррине тухма хатĕрленчĕ. Суранланманнисем пурĕ те виçĕ краснофлотец кăна юлнă. Çĕнĕрен килнĕ краснофлотецсенчен уйăрăлса каяс умĕн Юшков уссиллĕ матроса аса илчĕ те шырама пуçларĕ. Кам пулчĕ, ăçта кайса кĕчĕ вăл?—Халĕ ĕнтĕ пысăк йыш хушшинче шыраса та тупма çук.

— Уссиллĕскер! — тет Юшков. Ăна, уссиллĕскерсене, виç-тăватă çынна тупса кăтартрĕç. Анчах вăл çук.

— Бушлат тăхăннăскер! — тет Юшков, а краснофлотецсем пурте бушлатпа.

Унтан вăл ку матроссем пурте уссиллĕ, пурте бушлатлă, пурте хăюллă пулнине ăнланса илчĕ. Пĕринчен тепри нимĕнпе те уйăрăлса тăман пек туйăнчĕ. Çав шухăшпа вăл лăпкă çанталăк килсе тухнипе тӳлекленнĕ аслă тинĕс хĕрринелле утрĕ. Унпа пĕрле—унăн паттăр юлташĕсем.

— Эпир—матроссем!—терĕ Юшков, уссиллĕ матроса аса илсе.

МИХ. АЙГИР.
ÇУРÇĔР ФЛОЧĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1236 Типографи №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 53. 84 п.